25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АВГУСТ
20
КĔÇНЕРНИКУН
194 (6129) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе туллин усă курар

Тырпулсене йăнăçлăн пухса кĕртесси нумай енчен комбайнсемпе тата çăмăл машинăсемпе усă курма пĕлнинчен килет. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленире комбайнсене тата тырă вырмалли çăмăл машинăсене талăкне 16 сехетрен кая мар ĕçлеттермелле тесе кăтартса панă.

Республикăри машинно-тракторнăй станцисем чылайăшĕ уборка пуçланас умĕнех комбайнсене ĕçлемелли участоксене çитерчĕç, вĕсем çумне лайăх трактористсем çирĕплетрĕç. Çавăнпа пĕрлех комбайнсен агрегачĕсенче пĕрмай ĕçлеме колхозсем чи лайăх колхозниксене уйăрчĕç, машинăсем патне шыв, горючи турттарма, тĕштырра турттарма, сăвăрса тасатма тата типĕтме туртăм вăйĕпе ĕç вăйĕ уйăрса панă.

Комсомольски МТС комбайнсемпе ĕçлесе тырпулсене пухса кĕртес плана августăн 17-мĕшне 60 процент пурнăçланă. Уйрăмах комбайнер Иштяков юлташ аван ĕçлет. Унăн план тăрăх 130 гектар вырмалла, вăл 145 гектар вырнă та ĕнтĕ. Комбайн çумне зерноуловитель çакнине пула вăл тырпулсене тăккаламасăр пухса кĕртет. Иштяков юлташ машинăна юрататъ, ăна тирпейлĕ тыткалать, вăхăтра сĕрет, тасатать. Машина мĕн чухлĕ усă пама пултарать, вăл унтан çавăн чухлĕ усă илме тăрăшать, горючие перекетлет. Уборка пуçланнăранпа вăл 45 килограмм горючи перекетленĕ. Ку МТС-ра комсомолец М. Сахьянов та аван ĕçлет. Вăл та 120 гектар çинчи тырра вырса пухнă ĕнтĕ. Комбайнерсемпе трактористсем уйхирте тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, горючие перекетлеме тăрăшаççĕ, уборкăна тухнăранпа МТС пĕтĕмпе 1.101 килограмм горючи перекетленĕ. МТС куçса çÿрекен мастерской тунă. Çав мастерскойра механик Беззубов юлташ тăрăшса ĕçлет. Машинăсем çĕмĕрĕлсен, вăл вĕсене çийĕнчех юсама пулăшать. Комсомольски МТС политотделĕн работникĕсем комбайнсен агрегачĕсенчи работниксем хушшинче социализмла ăмăртса ĕçлессине вăйлатма тăрăшаççĕ. Кашни агрегатра ĕçлекенсем хушшинчех агитатор пур. Вăл политикăллă калаçусем иртгерет, стена хаçачĕ кăларать, тырă вырнă çĕрти çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать.

Çав вăхăтрах Улатăр, Йĕпреç, Елчĕк, Первомайски тата Кувакино районĕсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕç уйрăмах çителĕксĕр пулса пырать. Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Красноармейски тата Сĕнтĕрвăрри МТС-сен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсем комбайнсемпе усă курасси çине ответсăрла пăхаççĕ. Вĕсем августăн 15-мĕшне комбайнсемпе 140—200 гектар çеç вырнă. Сĕнтĕр районĕнчи МТС-ăн комбайнсемпе 960 гектар çинчи тырпула вырса пухас пулать, августăн 15-мĕшне унта комбайнсемпе 202 гектар кăна вырнă. Уборкăна тухас тĕле МТС комбайнсене юсаса çитермен пулнă. Пĕр комбайн ыраш вырнă çĕрте пĕртте ĕçлемен, ытти комбайнсем те çĕмĕрĕлсе, ĕçлемесĕр тăнисем пулнă. Машинăсем ĕçре ватсан, вĕсем патне кайса хăвăртрах юсама МТС куçса çÿрекен мастерской организацилемен. Çавăнпа та хăшпĕр комбайнсем çĕмĕрĕлсен нумай вăхăт хушши усăсăр лараççĕ. МТС дирекцийĕпе политотделĕ комбайнсемпе тырă вырас плана пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмаççĕ теме çук. Анчах вĕсем комбайнсемпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле тăвас тĕлĕшпе большевикла тимлĕхпе тăрăшни çук. Политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникне — Андреев юлташа уборка вăхăтне Юнга ялсоветне райкомпа райисполком уполномоченнăйĕ пулса ĕçлеме янă. Политотдел начальникĕ Константинов юлташ вара Андреева уполномоченнăй туса янипе килĕшнĕ, хăй вара Андреев çине çав ялсовет таврашĕнче 12 çухрăм хушшинче ĕçлекен 7 комбайн агрегачĕн ĕçĕсемшĕн ответлăх хунă. Çапла ĕнтĕ Андреевăн те Юнга ялсоветĕнче ĕçлемелле, те комбайнсен ĕçĕсене йĕркелесе яма тăрăшмалла?

Ку ĕç çине çиелтен пăхни ытти районсенче те пур-ха. Сăмахран, комбайнсемпе тырпулсене вырасси Вăрнар районĕнче çителĕксĕр пулса пырать. Крупская ячĕпе тăракан колхозăн уйхирĕнче ĕçлемелли комбайн пĕтĕмпе те виçĕ гектар кăна вырнă. Ку машина ĕçлемесĕр тăни çинчен МТС администрацийĕпе политотдел, паллах, лайăх пĕлсе тăнă. Анчах августăн 17-мĕшĕнче кăна политотдел начальникĕ Романов юлташ çак машинăна юсаттарас ĕçре пулăшма унта туха кайнă. Унччен МТС работникĕсем унта пулман.

Тырпулсене комбайнсемпе, çăмăл машинăсемпе вырнă çĕрте тырă чылай тăкăнни пулкалать. Кунтан ĕнтĕ тăкаксене хирĕç кĕрешессине лайăх организацилеме кирли курăнать.

Уборкăра комбайнсемпе тырă вырас, авăн çапас ĕçсен планĕсене тултарасси — МТС директорĕсен, политотделсен тата мĕнпур работниксен пысăк задачи пулса тăрать. Асра тытас пулать: плансене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ĕçлесе тултармалла. Уборкăра кая юлни тырă нумай тăкăнса юласси патне илсе пыма пултарать. Çавăнпа та комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе те кунĕн-çĕрĕн ĕçлессине организацилемелле. Комбайнсемпе çÿллĕ хăмăл хăварса вырма юрамасть, мĕншĕн тесен хăмăла вăрăм хăварсан ыраш тата ытти тырăсен пучахĕсем те нумай касăлса ÿксе юлма пултараççĕ. Кашни комбайн çумĕнчех зерноуловитель тата улăм пухакан хатĕр пулмалла. Тырра комбайнпа вырнă хыççăн пучахсене йăлтах пухас пулать.

Комбайнсем юсавлă пулччăр. Вĕсен молотилкисемпе сортировкисене лайăх йĕркелемелле. Вĕсем юсавлă пулманнипе шĕкĕлченмен пучахсем ан юлччăр, çапăнман тырă улăм ăшне ан кайтăр. Комбайнсемпе çапнă чухне тухнă тырпула тĕплĕн шута илсе пымалла. Çапнă тырра çав кунах тасатас пулать. Ку тĕлĕшпе тырă тасатакан машинăсемпе талăкне 20 сехетрен кая мар ĕçлемелле. Нÿрĕ тырра çийĕнчех типĕтмелле.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕç мĕнле пыни çинчен» йышăннă постановленире çакна кăтартса панă:

«Парти райкомĕсен тата политотделсен работникĕсен уборка пахалăхне хăйсен тĕрĕслесе тăмалла; колхоз председателĕсен тырпулсене вырса пуçтарнă участоксене йышăннă чухне уйрăмăнах ĕçĕн пахалăхĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла». Çак кăтартăва çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Комбайнсен агрегачĕсенчи политикăллă-массăллă ĕçшĕн пĕтĕмпех МТС политотделĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Комбайнерсене, трактористсене тата колхозниксемпе колхозницăсене пĕрмаях политикăллă пурнăçпа паллаштармалла, вĕсене партипе правительство комбайнерсемпе трактористсене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă решенисене, отечественнăй вăрçă мĕнле пыни çинчен ăнлантарса памалла.

ВЦСПС-ра

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ 1942 çулти июль уйăхĕнчи социализмлă ăмăрту итогĕсем çинчен халăх комиссариачĕсем тăратнă материалсене пăхса тухнă.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ продукци туса кăлармалли июль уйăхĕнчи государственнăй плана тултарнă тата иртгерсе тултарнă заводсен лайăх ĕçне палăртнă тата вĕсене премилеме укçа уйăрнă. Çав заводсен шутĕнче Канашри вагонсем юсакан завод та пур.

Мухтава тивĕçлĕ ĕçлемелле—çакăн пек пирĕн рабочисен ĕмĕчĕ

КАНАШ, августăн 19-мĕш. (**Телефонпа**). Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне иккĕмĕш уйăх камăр алăрах хăварни тата июль уйăхĕнчи ĕçсемшĕн Халăх Комиссариачĕ пире премилеме палăртни завод коллективне татах та тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать. Коллектив халĕ ку таранччен тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе хăварассишĕн кĕрешет. Уйрăмах Токаревпа Соколовский юлташсем ертсе пыракан цехсенчи рабочисен ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Кунти токарьсем Кисинпа Дмитриев юлташсем хăйсен нормине 3—4 хут, Смоловипа Абрамова юлташсем 4—5 хут иртгерсе тултараççĕ. Миневичпа Владимиров рабочисем те нормăран тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Кашни рабочи çапла тухăçлă ĕçлени цех плана тултарассин ăнăçлăхне татса парать. Токаревпа Соколовский юлташсен цехĕсем иртнĕ уйăхри плана срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç, çак уйăхра та талăкри графика тикĕс пурнăçласа пыраççĕ. Продукци туса кăлармалли плана чылай ÿстернĕ пулин те, вĕсем çак уйăхăн малтанхи çурринчи задание ăнăçлăн тултарчĕç.

Премие тивĕçлĕ ĕçлес, ялава алăран вĕçертес мар—çакăн пек ку цехсенчи рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен ĕмĕчĕ.

Г. СОРОКИН.
Заводри партбюро секретарĕ.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри виçĕ уйăхри çапăçусен итогĕсем

(Майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшне çити)

Хĕрлĕ Çар Воронеж районĕнче, Дон шывĕ тавращĕнче тата Кăнтăрта нимĕçсен наступлени тăвакан фашистла войскисене хирĕç татти-сыпписĕр тата юнлă çапăçусем туса пычĕ, халĕ те туса пырать. Çак çапăçусем питех те хаяррăн пулса пыраççĕ.

Çулла пуçланнă тĕле Германи командованийĕ фронтăн кăнтăрти участокĕсенче нумай войскăсем, пиншер танксемпе самолетсем пухса тăратнă. Францири, Бельгири, Голландири нумай гарнизонсене нимĕç командованийĕ шăпăрпа шăлсах тасатнă. Юлашки икĕ уйăх хушшинче кăна Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта çав çĕршывсенчен 22 дивизие, вăл шутра 2 танковăй дивизие, куçарса килнĕ, малтан куçарнисем ку шута кĕмеççĕ. Вассаллă çĕршывсенче—Италире, Румынире, Венгрире, Словакире мобилизаци туса Гитлер 70 çити дивизисемпе бригадăсем пухнă, çурçĕрте финсен войскисене пухса хутшăнтарнă, çавсене вара пурне те Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта кăларса янă. Хăратнипе тата сутăн илнипе усă курса, гитлеровецсем çавăн пекех тата Францири, Бельгири, Данири, Голландири, Испанири преступниксене, çын пурлăхне юратакансене пухса отрядсем тăваççĕ. Кунсăр пуçне, гитлеровецсем Польшăпа Чехословакире ирĕксĕрлесе мобилизаци туса иртгернĕ. Çак кĕлмĕçленсе илнĕ мĕнпур салтаксене пухса тата хăйĕн мĕнпур вăйĕсемпе резервĕсене илсе килсе, нимĕçсем кăнтăрти участоксенче пирĕннинчен чылай йышлăрах войскăсемпе техникăна пухса тăратрĕç, çапла майпа пирĕн войскăсене хĕссе Совет çĕршывĕшĕн питех те кирлĕ чылай районсемпе хуласене тытса илчĕç. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем Дон районĕнче тата Кубаньре пысăк территори тата промышленность енĕпе паллă вырăнта тăракан хуласене — Ворошиловград, Новочеркасск, Шахты, Ростов, Армавир, Майкоп хулисене тытса илчĕç. Нимĕçсем йышăннă районсенчи халăхăн пысăк пайне куçарса кайнă пулин те, тырпула тата заводсен оборудованийĕсене турттарса тухнă тата пĕр пайне чакнă чухне пĕтерсе тăкнă пулин те, Совет Союзĕ çак уйăхра чылай материальнăй çухатусем тÿсрĕ.

Противник çапăçăва хăйĕн çынсем тĕлĕшĕнчи пĕтĕм резервĕсене тата питех те нумай техникăна кĕртсе ячĕ пулин те, нимĕçсен наступлениллĕ операцийĕсем Воронеж енче тата Кăнтăр енче кăна аталанса пычĕç, анчах вăл операцисем вăрçăн малтанхи тапхăрĕнчипе танлаштарсан чылай вăраххăн пулса пычĕç. Çакна калани те çитет: Воронеж участокĕнче нимĕçсем уйăх çурă хушши ĕнтĕ пĕр вырăнта тапăртатса тăраççĕ, юлашки вăхăтра вара фронтăн кăнтăр участокĕнчи чылай вырăнсенче пуçарулăха совет войскисем хăйсен аллине илчĕç. Дон шывĕ тавращĕнче Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисен хаяр атакисене темиçе эрне хушши сиресире ярса пырать, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкать. Кăнтăрта çеç нимĕçсем калама çук пысăк çухатусем тÿссе чылай малалла кайма пултарчĕç. Ытти фронтсене илес пулсан вара, нимĕç войскисем унта наступлениллĕ операцисем туса пыма пултараймарĕç кăна мар, пачах урăхла, Брянск, Хĕвеланăç, Калинин тата Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕсенче совет войскисем активлă çапăçусем туса пыраççĕ, çав çапăçусенче вуншар пин нимĕçсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи иртнĕ уйăхсенчи хаяр çапăçусенче Хĕрлĕ Çар нимĕçсен, итальянецсен, румынсен тата венгерсен захватчикла войскисене çынсем тата вăрçă техники тĕлĕшпе çавтери пысăк çухату тÿстерчĕ.

Кăçал çулла виçĕ уйăх хушши, майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшне çити, пынă активлă çапăçусенче нимĕçсем 1.250.000 салтакпа офицер çухатнă, вĕсенчен 480.000 çынран кая мар вилнĕ. Нимĕçсем кунсăр пуçне 3.390 танк, 4.000 çити оруди тата 4.000-рен кая мар самолет çухатнă.

Совет войскисем майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшне çити çакăн пек çухатусем тÿснĕ: вилнисене, аманнисене тата пĕр хыпарсăр çухалнисене шутласан 606.000 çын пĕтнĕ, 2.240 танк, тĕрлĕ калибрлă 3.162 оруди, 2.198 самолет пĕтнĕ.

Кăнттамăн суйса тата кулăшла элексем шухăшласа кăларса, гитлерла ушкăн Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра хăй тÿснĕ çухатусене каллех пытарма хăтланать.

Элексем туртса кăларма хăнăхнă гитлеровецсем пуçа çавăрса яракан суя цифрăсем илсе кăтартаççĕ. Çапла, сăмахран, кăçалхи августăн 12-мĕшĕнче нимĕçсем çак çулти çуркуннехипе çуллахи çапăçусен итогĕсем çинчен пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Гитлеровецсем çапла ĕнентерме хăтланнă: нимĕç войскисем çак вăхăт хушшинче 1.044.241 çынна тыткăна илнĕ иккен, 10.131 оруди, 6.271 танк тата 6.056 самолет тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă иккен! Хĕрлĕ Çар тÿснĕ çухатусем çинчен Совинформбюро пичетлесе кăларнă чăн-чăн даннăйсем гитлеровецсен суя пĕлтерĕвĕсене пĕтĕмĕшпех шăлса ыватаççĕ. Гитлерпа унăн Европăри союзникĕсен çарĕсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Нимĕçсен командованийĕ советăн çухатăвĕсем çинчен ирсĕр элексем шухăшласа кăларнине, çав вăхăтрах хăйĕн войскисен çухатăвĕсене пытарма питĕ тăрăшнине шăпах çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ. Тĕлĕнмелле: Советăн çухатăвĕсене гитлеровецсем юлашки çын таранах шута илме пултараççĕ, хăйсен çухатăвĕсем çинчен вара, вĕсемшĕн питех те усăн курăнса тăраканскерсем çинчен нимĕн те шарламаççĕ, çăвара шыв сыпнă пекех чĕнмесĕр тăраççĕ. Çав вăхăтрах нимĕçсен юлашки виçĕ уйăх хушшинчи çухатăвĕсем килес вăхăтсенче нимĕç войскисене çĕмĕрсе тăкма условисем хатĕрлеççĕ, хуллен пулин те, анчах çирĕппĕнех хатĕрлеççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Августăн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех тата **Пятигорскпа Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 17-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 çити танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 ытла автомашинине, горючи тултарнă 6 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне тата горючин складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 20 батарейине пусарса лартнă, пĕр катера путарнă, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă хĕрÿллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенин участокĕнче нимĕçсен пысăк вăйĕсем наступление куçнă. Юнлă çапăçу пулса иртнĕ хыççăн (çав çапăçура нимĕçсен 10 танкне пĕтерсе тăкнă тата 800 çити гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ), пирĕн чаçсем оборонăн çĕнĕ рубежĕсем патне чакнă. Тепĕр участокра пирĕн стрелковăй часть противникăн пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕнĕ йышлă вăйĕсене хирĕç çапăçнă. Нимĕçсен 4 танкне пĕтерсе тăкнă тата 700 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн наступление куçнă войскисене хирĕç çапăçнă. Халăх пурăнакан В. пункт патĕнче хаяр çапăçу пулса иртнĕ, çав çапăçура нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 600 çити салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Пирĕн артиллери, противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă вăйĕсем çине кĕтмен çĕртен пеме тытăнса, нимĕçсен 8 танкне тата пехота ларса пыракан 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем противникăн Кубань юханшывĕ урлă каçнă группировкине хирĕç çапăçнă. Н-ски подразделени контратакăна куçса гитлеровецсен батальонне çапса аркатнă. Нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ.

Пятигорск районĕнче совет войскисем тăшманăн хаяр атакисене сиресире пынă. Пĕр участокра кăна противникăн 300 ытла салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Воронежран кăнтăрарах вырăнта пирĕн чаçсем халăх пурăнакан К. пунктра противника хирĕç урамсенче çапăçнă. Çав çапăçусенче гитлеровецсем çынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем тÿснĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Волхов фронтĕнче разведка тăвакан отрядсем активлăн кĕрешнĕ. Старши лейтенантăн Наум Прессăн подразделенийĕнчи боецсем нимĕçсен дзочĕ патне шăвăнса кĕнĕ. Красноармеец Корнев амбразуртан пулемет туртса кăларнă та дзот ăшне граната ывăтнă. Ытти разведчиксем тăшман çине пеме тытăнса 20 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ. Старши лейтенант Иванов ертсе пыракан пирĕн 8 разведчик вăрманта 25 гитлеровеца тĕл пулнă. Пирĕн боецсем автоматсенчен пеме тытăнса 24 нимĕçе пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пĕр салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ июль уйăхĕнче 106 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. 8 кĕпере çĕмĕрнĕ тата нимĕç оккупанчĕсен темиçе складне çунтарса янă. Отрядри партизансем противникăн чугунçул тăрăх чĕрĕ вăй турттарса пыракан 5 поезчĕ çине пулеметсемпе автоматсенчен пенĕ.

* * *

Нимĕçсен 336-мĕш пехотнăй дивизийĕн 685-мĕш полкĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна илнĕ салтак Франц Рейнгольд çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи Францире Нантпа Реннра тăратчĕ. Франци халăхĕ нимĕçсене чĕререн кураймасть, нимĕçсене хаяррăн тавăрма меллĕ вăхăт килсе тухасса çеç кĕтсе тăрать. Çавăн пирки те ĕнтĕ салтаксемпе офицерсем Францие фронт пекех шутлаççĕ, унта паян мар пулсан ыран нумай вăй хумалла пулать тата жертвăсем нумай тÿсмелле пулать, тесе шутлаççĕ. 1942 çулти июнь уйăхĕнче эпир Хĕвелтухăç фронтне тухса килтĕмĕр. Пирĕн дивизие Российăна янишĕн пирĕн салтаксемпе офицерсем питех те кăмăлсăр пулчĕç. Çавсенчен нумайăшĕсем хăйсен пурнăçне çăлса хăварассишĕн тăрăшнă пирки çеç кăмăлсăр пулчĕç. Францири лайăх та лăпкă пурнăçа пăрахса хăварса, Российăна вилĕм тупма нихăшĕн те килес килмерĕ».

* * *

Воронеж облаçĕнчи Большая Верейка ялĕнчен нимĕçсене хăваласа янă хыççăн пирĕн Н-ски чаçри боецсемпе командирсем çырмара красноармеецăн виллине тупнă. Çав красноармееца гитлеровецсем этемле мар çавтери тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ пулнă. Фашистла ирсĕрсем тыткăна лекнĕ çав красноармеецăнне хăлхисене, сăмсине, тутисене касса илнĕ, унăн пуçĕ çинчи тирне сÿсе илнĕ, кайран çырмана кайса пăрахнă.

* * *

Куртăра (Бельгия) пир-авăр фабрикинче патриотсем складсене тивертсе янă. Германие яма хатĕрлесе хунă 160 тоннăна çити продукци вутра çунса кайнă.

Августăн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Августăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех тата **Пятигорскпа Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем вăйлă çапăçусем туса пынă. Н-ски часть пĕр кун хушшинче противникăн йышлăрах вăйĕсен виçĕ атакине сирсе пăрахнă. çапăçу хирĕнче нимĕçсем хăйсен çĕмĕрĕлнĕ 4 танкне тата салтакĕсемпе офицерĕсен 300 виллине ытла пăрахса хăварнă. Пирĕн боецсем темиçе пулемет, автоматсемпе винтовкăсем тата боеприпассем тытса илнĕ. Тепĕр участокра халăх пурăнакан пункт патĕнче пирĕн подразделени нимĕçсен 100 ытла автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

Летчик-истребительсен подразделенийĕн командирĕ старши лейтенант Козлов сывлăшри çапăçура нимĕçсен 3 бомбардировщикне персе антарнă. Козлов юлташ пĕтĕмпе ĕнтĕ нимĕçсен 13 самолетне тата ытти летчиксемпе пĕрле 5 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн разведка тăвакан группăсем противникăн сывăхри тылĕсем çине çĕрле пырса тапăннă. Противникăн çар грузĕсем тиенĕ 7 автомашинине, прожектор установкине, икĕ зенитнăй орудине тата 770 гитлеровеца яхăн пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пункта хÿтĕлесе тăракан Н-ски подразделени противникăн атакине сирсе пăрахнă тата нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем гитлеровецсен хаяр атакисене темиçе хутчен сире-сире пăрахнă. Противникăн мотопехота полкне çапса аркатнă. Нимĕçсенне автомашинăсем нумай тата 7 танк пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет войскисен чаçĕ противникăн пехотипе танкĕсене хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă.

Пятигорск районĕнче пирĕн войскăсем наступлени тăвакан противника хирĕç çапăçнă. Нимĕçсем пирĕн войскăсене кăштах хĕсме пултарнă. Кĕтмен çĕртен пырса тапăнса казаксем гитлеровецсене чылай пысăк сиен кÿнĕ, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити вакласа пĕтернĕ. Противник çав района çĕнĕ резервсем куçарса пырать.

* * *

Брянск фронтĕнче артиллерирен хире-хирĕç персе тăнă. Артиллерин старши лейтенант Мокеев юлташ командир пулса ертсе пыракан батарейи противникăн 8 атакине сирсе пăрахнă, нимĕçсен танкне, минометсен 3 батарейине тата артиллерин пĕр батарейине пĕтерсе тăкнă, шыв урлă каçмалли кĕпере çĕмĕрнĕ. Артиллерирен персе нимĕçсене 500 çынран кая мар вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен артиллерин 96-мĕш полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă ефрейтор Август П. çапла каланă: «Эпĕ хам курнă темиçе факт çинчен каласа парасшăн. Нимĕç салтакĕсем халăхран ыйтса тăмаççĕ, вĕсем япаласемпе çимĕçсене вăйпа тăпăлтарса илеççĕ. Балаклея ялĕнче пĕр батарейăри салтаксем кăна, обер-фельдфебель Грюнбихлер ертсе пынипе, хресченсенчен мăйракаллă шултăра выльăхсем 59 пуç туртса илнĕ. Пĕр колхозра салтаксем ялти мĕнпур çынсене çаратса пĕтернĕ тата хăйсене ыррăн кĕтсе илсе хăналаманшăн нумай хресченсене вилес патне çитиччен хĕненĕ. 1942 çулти июнĕн 10-мĕшĕнче Граков районĕнче эпир йывăр аманнă икĕ красноармееца канавра тупрăмăр. Клейст лейтенант вĕсене çийĕнчех персе пăрахма хушрĕ. Обер-ефрейтор Фюрст вĕсене пирĕн куç умĕнчех пистолетран пере-пере пăрахрĕ. Июлĕн 28-мĕшĕнче эпĕ нимĕç салтакĕсен ушкăнĕ аманнă 8 красноармееца тата тыткăна лекнĕ 6 вырăса персе пăрахнине куртăм».

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш танковăй дивизийĕн 63-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăри ефрейтор Алоиз Майер унтер-офицер Якоб Шнейдер патне çапла çырнă: «Эпĕ юлташа çухатрăм. Ăна партизансен пульли лекрĕ... Эпир партизансене хирĕç икĕ уйăх ытла çапăçатпăр, анчах ку таранччен нимĕнле ăнăçу та тăваймарăмăр... Пире кашни утăмра вилĕм кĕтсе тăрать. Эпир йывăр кунсене тÿссе иртгертĕмĕр, нумай юлташсенчен уйăрăлтăмăр. Манăн ротăна нумай хутчен çынсем хушса пачĕç, рота çулталăк хушшинче 300 çын ытла çухатрĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Курск облаçĕнчи Николаевка ялĕнчен Германие ирĕксĕр ĕçлеттерме арçынсемпе хĕрарăмсене 100 çынна ытла хăваласа кайнă. Красноармеецăн арăмне Пелагея Ивановна Любимцевăна, вăл хăйĕн пĕчĕк хĕрачине пăрахса тăван ялĕнчен кайма килĕшменшĕн кăна, бандитсем персе пăрахнă.

* * *

Норвегин паллă патриочĕ Ларсен ертсе пыракан партизансен отрячĕн кĕрешĕвĕ çинчен çĕнĕ хыпарсем илнĕ. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ çĕрле нимĕçсен чаçĕн штабне çĕмĕрсе кĕнĕ. Патриотсем 10 офицера вĕлерсе пĕтернĕ, хĕçпăшалсемпе документсем тытса илнĕ те тарса пытаннă. Темиçе кун иртсен Ларсен отрячĕ нимĕçсемпе финн салтакĕсем ларса пыракан поезда ÿпĕнтерсе янă Поезд рельсăсем çинчен сиксе кайсан, партизансем вагонсенчен чупса тухакан гитлеровецсем çине пулеметсенчен пеме тытăннă. Çав операци вăхăтĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем! Хĕрлĕ Çар фончĕ валли тырпул срокчен парар! Фашистла çĕлен калтасене хăвăртрах пĕтерсе тăкма хамăрăн мухтавлă боецсене пулăшар!

Ялхуçалăх ĕçĕсен хăвăртлăхне ÿстермелле

(Республикăри радиопереличкăран)

Тырпулсене пухса кĕртес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тата кĕрхине ирттерес ыйтусемпе августăн 19-мĕшĕнче республикăри районсен радиопереклички пулса иртрĕ. Парти райкомĕсен секретарĕсем, райсовет исполкомĕсен председателĕсем, МТС политотдел начальникĕсем, çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсем микрофон патне пырса хăйсен районĕнче ялхуçалăх ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен каласа кăтартрĕç.

Чи малтан ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташ каласа пачĕ. Район тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе малтанхи пекех юлса пырать. Кĕрхи тырăсене вырса пĕтерменха, татах 400 гектар ытла вырмалла. Районри нумай колхозсен председателĕсем машинăна хирĕçле шухăш-кăмăла тытса пыраççĕ. Парти райкомĕ, райсовет исполкомĕ çакăн çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Тырпулсене пухса кĕртмелли пур машинăсене те туллин ĕçлеттерес тата уйхир ĕçĕсен хăвăртлăхĕсене татăклăнах ÿстерес тĕлĕшпе район руководителĕсем нимĕнех те туман. Жнейкăсем, лобогрейкăсем ку районра пĕтĕмпе 100 пулсан, вĕсенчен 69-шĕпе çеç ĕçре усă кураççĕ. Августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа 19-мĕшне çити вăхăтра районра машинăсемпе 100 гектар кăна вырнă. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташ машинăсемпе начар усă курнине сĕрмелли çу çуккипе ăнлантарса парать. Анчах ĕç кунта мар. Сĕрмелли çу тупас ыйтăва вырăнтах татса пама май пулнă. Машинно-тракторнăй станцин отхочĕсемпе пĕлсе усă курнă пулсан, сĕрмелли çу вырăнтах тупăнмаллаччĕ.

Районри колхозсем государствăна тырă памалли графика мĕнле тултарса пынипе парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ çителĕклĕ интересленмеççĕ. Миçе колхоз государствăна тырă пама тытăннине, тырпула турттарса тухас пĕлĕшпе панă задани юлашки пилĕккунлăхра мĕнле пурнăçа кĕнине ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташ пĕлмест. Çав вăхăтрах Элĕк районĕ тырă памалли графика 10 процент кăна тултарнă, çапла вара район пĕтĕм республикăна каялла туртса пырать.

Район кĕраки ĕçĕсене те питех те хуллен пурнăçласа пырать.

Кун хыççăн Куславкка райсовечĕн исполком председателĕ Волков тата çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Копылов юлташсем, Сĕнтĕрвăрри райкомĕн секретарĕ Борзов тата МТС политотделĕн начальникĕ Степеркин юлташсем хăйсен районĕсенче ялхуçалăх [illegible] мĕнле пыни çинчен каласа пачĕç.

Куславкка Сĕнтĕрвăрри районĕсем те тырпулсене пухса кĕртес [illegible] ярса пыраççĕ, государствăна ялхуçалăх [illegible]

тултарас тĕлĕшпе питĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Куславкка районĕн руководителĕсем — райком секретарĕ Львов тата райисполком председателĕ Волков юлташсем: «районра машинăна хирĕçле шухăшсем вăйлă, çавăнпа та уборка ĕçĕсем вăраха кайрĕç», тесе ÿпкелешеççĕ. Львовпа Волков юлташсенчен çакна ыйтас пулать: район кая юлнипе вĕсем кумайччен килĕшсе пурăнма шутлаççĕ-ши? Тырпулсене пухса кĕртмелли машинăсемпе хăçан туллин усă курма шутлаççĕ?

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç Сĕнтĕрвăрри районĕнче те лайăхах пулса пымасть. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Борзов юлташ пĕлтернĕ тăрăх, районри 74 жнейкăран 27 жнейки çеç ĕçлеççĕ. Уборкăн малтанхи кунĕсем кăтартса панă тăрăх, ялхуçалăх машинисене нумай колхозсенче васкаса тата начар пахалăхпа юсанă пулнă. Жнейкăсем ĕçсĕр лараççĕ, комбайнсем те калама çук начар ĕçлеççĕ. Вĕсемпе пĕтĕмпе те... 4 гектар çеç кĕрхи тырра вырса пуçтарнă. Çурхи тырăсене вырма тапçанах вăхăт çитнĕ пулин те, районра халĕ те вăл ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха. Чылай колхозсен председателĕсем кăна мар, районри ертсе пыракан уйрăм работниксем те «симĕс» шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Çапла, сăмахран, политотдел начальникĕ Степеркин юлташ радиопереличкăра çурхи тырăсене комбайнсемпе вырма ирттерех-ха тесе каларĕ. Çавăн пек сÿпĕлтетнисем тырпулсене вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртес ĕçе пысăк сиен кÿнине ĕнентерсе тăма кирлех те мар.

Радиопереличкăра ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ Волков, Пăрачкав райкомĕн секретарĕ Романов тата Пăрачкав МТС политотдел начальникĕ Астафьев юлташсем тухса каларĕç.

Елчĕк районĕнче çурхи тырăсене пухса кĕртме тăхтаса тăни палăрать. Хăшпĕр колхозсем çурхи культурăсене вырма халĕ те тытăнман-ха. Тырă памалли графика юлашки пилĕккунлăхра район пĕтĕмпе те 20 процент çеç тултарнă. Чылай колхозсенче транспортнăй бригадăсем организацилемен. Организациленĕ пулсан та, вĕсемпе кирлĕ çĕрте усă курмаççĕ. Çакăн пекех ĕç тăрать Пăрачкав районĕнче те.

Радиоперекличка вĕçленес умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ тухса каларĕ. Вăл тырпулсене пухса кĕртес, кĕрхине ирттерес тата [illegible] ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçре [illegible] руководителĕсем [illegible] большевикла [illegible]

КАШНИ КОЛХОЗРАХ УБОРКĂРА ĂМĂРТСА ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

ТАВАЙ, августăн 19-мĕш. (Телефонпа). Районра [illegible] уборка пуçланнăранпа [illegible] 38 колхозра [illegible]

[illegible]

С. АНДРЕЕВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татăççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Нăрваш-Шăхаль ялсоветне кĕрекен «Восход» колхоз государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татса пырать. [illegible] 1943 çулхи ялхуçалăх продукчисене пама пуçларĕ. 43 килограмм аш-какай панă та [illegible] Колхозниксемпе колхозницăсем 1942 çулти ялхуçалăх налогне [illegible]

И. МИТРОФАНОВ.

Çуртри вырса пĕтерĕççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Янчелă ялсоветĕнчи «Победа» колхоз августăн 18-мĕш тĕлне тулă тата урпа вырса пĕтерчĕ. «Прогресс»-па «Новая сила» колхозсенче те тулăпа урпа вырса пĕтернĕ. Çак колхозсенче [illegible] лĕ вырăççĕ, вырнă тыр[illegible] пана хывăççĕ. «Прогресс» колхоза [illegible] «Победа» колхоз государствăна [illegible]

Р. ВАСИЛЬЕВА.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Хула валли топливо хатĕрлесси — паян тумалли ĕç

Партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Партин Шупашкар хулинчи активĕ августăн 18-мĕшĕнче пулнă пухура хула валли топливо хатĕрлесси çинчен сÿтсе-яврĕ.

Ку ыйтупа пухура хула Совет исполкомĕн председателĕ **И. И. Золотников** юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче хулари предприятисем, учреждениесем, шкулсем, больницăсем тата пурăнмалли çуртсем валли вутă хатĕрлес, электростанци валли нефть тата машинăсене сĕрмелли çу кÿрсе хатĕрлес ĕçсем мĕнле пыни çинчен çутатса пачĕ.

Хальхи вăхăтра Шупашкар валли çулталăкра кирлĕ вутăран чĕрĕк пайне кăна касса хатĕрленĕ, турттарасси вара татах та начартарах пулса пырать. Кăçал вутă касса хатĕрлес ĕçе предприятисемпе учрежденисен тата хула халăхĕн хăйсен тумалла. Вĕсене пурне те вутă хатĕрлеме заданисем панă. Хăшпĕр предприятисен коллективĕсем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Ленин ячĕпе тăракан фабрикăн коллективĕ вутă касса хатĕрлес задание пурнăçа кĕртнĕ.

Çав вăхăтрах хула валли вутă хатĕрлес ĕç пĕтĕмĕшпе илсен начар пулса пырать. Кирпĕч завочĕ вутă çуккипе аптăрать. Анчах унăн директорĕ Старшов юлташ вутă хатĕрлес ĕçе халиччен те тытăнман. Çавăн пекех вутă хатĕрлемелли заданисене пурнăçлас тĕлĕшпе столовăйсемпе ресторансен тресчĕ (директорĕ Герасин юлташ), çăкăр пĕçерекен комбинат (директорĕ Орлов юлташ) çавтери начар ĕçлеççĕ. Хула халăхĕ пурăнмалли çуртсем валли хăйĕн вăйĕпе вутă хатĕрлес ĕçе паянхи кунччен те тивĕçлĕ пек йĕркелесе яман. Вутă хатĕрлемелли заданисене тултарас ĕçре стройтрест (управляющийĕ Стешов юлташ), «Заготзерно»н республикăри контори (управляющийĕ Минаев юлташ) чăтма çук кая юлса пыраççĕ.

Вутă хатĕрлесси начар пырать пулсан та, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем нумайĕшĕсем çак ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ. Вутă хатĕрлемелли задание тултарма, вутă турттарма кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Вутă хатĕрлес ĕçе халех лайăхлатас пулать. Кашни коллективăн хăйĕн заданине васкавлăн тултармалла. Вутă хатĕрленипе пĕрлех, торф кăларса типĕтес плана та тултармалла. Анчах Атăл лешъенчи торф предприятийĕ çак ĕçе çителĕксĕр туса пырать. Электростанци валли горючи кÿрсе хатĕрлес ĕçе те халех тăвас пулать. Кунпа пĕрлех, хутмалли япаласене перекетлесси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла.

Пренире тухса каласа, завод директорĕ **Канатов** юлташ завод коллективĕ вутă хатĕрлес енĕпе мĕнле ĕçлени çинче чарăнса тăчĕ. Завод дирекцийĕпе пуçламĕш парторганизаци вутă касакансене ушкăнпа апатлантарас ĕçе организациленĕ, вĕсем патне çĕнĕ хаçатсемпе журналсем ярса тăраççĕ, вĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пыма политрук уйăрнă. Завод коллективĕ хăйне панă задание 53 процент тултарнă. Уйрăм бригадăсем пĕр кун хушшинче кашни çын пуçне 5 кубометр ытла вутă касса хатĕрлени пулнă. Çакăнпа пĕрлех Канатов юлташ вутă турттарма завода пулăшу пама ыйтать, хула Совечĕн исполкомĕ завода пымалли çула юсама пулăшманнине кăтартса парать.

Воронин юлташ (сыхăну управленийĕ) хăйĕн сăмахĕнче Шупашкар вăрманпромхозĕн директорĕ Соколов юлташ вутă касса хатĕрлес ĕçре кирлĕ пек йĕркелĕх туманни, вăрман участокĕнчи ĕçшĕн ответлă работник Шишкин пĕрмаях ÿсĕр çÿрени çинчен калать, вутă турттарас ĕçе йĕркелесе яма кирлине кăтартса парать.

Панишев юлташ хула Совечĕн исполкомĕ çулйĕрсене юсама, вутă турттарас ĕçе организацилеме тăрăшманнине палăртать.

Виççĕмĕш номерлĕ шкулăн директорĕ **Иварбеев** юлташ шкул валли вутă хатĕрлеме хула Совечĕн исполкомĕ кая юлса задани пани çинчен калать. Атăл хĕрринче сулăсенчи вутта çырана кăларса валеçес ĕçре шанчăксăр çынсем ĕçленине кăтартса парать.

— Шкул ачисене вутă касма Ильинкăна ямалла туни — тĕрĕс ĕç мар, — тет вăл. — Вĕренекенсене вутă касма хула çывăхĕнчи вăрмана ярсан аванрах пулмалла. Профсоюзсен организацийĕсем вутă хатĕрлес ĕçе хутшăнмаççĕ. Учительсен союзĕн пирĕн шкулти месткомĕн председателĕ учительница Семенова юлташ тата местком членĕсем ыттисем те вутă касма кайма килĕшмеççĕ. Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çар командирĕн арăмĕ, учительница Федотова юлташ, виçĕ ачаллăскер, вутă касма кăмăл турĕ. Пирĕн тата вутта перекетлесси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Ку тĕлĕшпе çуртсене хĕле кĕме лайăх хатĕрлесе çитермелле.

Антонов юлташ электроэнерги перекетлес, электростанци валли горючи хатĕрлес ыйтусем çинче чарăнса тăрать.

ВКП(б) Обкомĕн вăрман промышленноçĕ енĕпе ĕçлекен секретарĕ **Н. Бобров** юлташ хальхи вăхăтра топливо хатĕрлесси вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи питех те пысăк задача пулса тăни çинчен калать. Республикăра топливо çителĕклĕ пур. Парти Обкомĕпе Совнарком топливо хатĕрлес тĕлĕшпе хытăрах ĕçлеме кирлине хуçалăх работникĕсемпе парторганизацисене июнь уйăхĕнче кăтартса панăччĕ. Унтанпа уйăх çурă иртрĕ. Анчах çак ĕçе тума кирлĕ пек тытăнман-ха. Шултăра предприятисен 38 пин кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, 10 пин кубометр кăна хатĕрленĕ. Вăрман хатĕрлев организацийĕсем задание 19 процент кăна пурнăça кĕртнĕ. Çак ĕç питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем ăнланса илеймен, парторганизацисен секретарĕсем вара вутă касса хатĕрлес ĕçе организацилеме тăрăшман. Хĕле кĕме хатĕрленмен, топливо хатĕрлеме тăрăшман руководительсене çирĕп ответ тыттарма та вăхăт çитрĕ.

Завод директорĕн заместителĕ **Бунин** юлташ вăрманта ĕçлекенсене вĕри апат çитерессине организацилеменшĕн наркомторгпа тата столовăйсемпе ресторансен трестне хытă критикăлать.

ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ **Романова** юлташ вăрман хатĕрлекен организацисем вăрмана ĕçлеме пынă çынсен ĕçне лайăх йĕркелесе яма тăрăшманнине, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем тата пуçламĕш парторганизацисем ВКП(б) хула комитечĕн XVI-мĕш пленумĕ вутă хатĕрлесси çинчен йышăннă решение япăх пурнăça кĕртсе пынине палăртать, хула валли топливо хатĕрлес тĕлĕшпе практикăллă ĕçсене мĕнле организацилемеллине кăтартса парать.

Парти активĕн пухăвĕ хăйĕн решенийĕнче предприятисемпе учрежденисем тата хулари халăх валли топливо хатĕрлесси хуçалăх, политика тата вăрçă тĕлĕшĕнчи пысăк задача пулса тănине палăртрĕ. Хуçалăх руководителĕсене, парторганизацисен секретарĕсене тата мĕнпур коммунистсене вутă хатĕрлес ĕçе вăйлатма хушрĕ. Актив пухăвĕ Шупашкар хулинчи коммунистсемпе комсомолецсене, рабочисемпе служащисене пурне те хула валли топливо хатĕрлес тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлеме чĕнчĕ, çак ĕçе ăнăçлăн пурнăçлани Германи фашизмне хирĕç геройла çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшни пулса тăнине кăтартса пачĕ.

Хĕле кĕме хатĕрленетпĕр

ВĂРНАР, августăн 19-мĕш. (**Телефонпа**). Чугунçул работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăннăранпа станци коллективĕ хăйĕн ĕçне палăрмаллах аванлатрĕ. Дежурнăйсем поездсене расписани тăрăх йышăнса ăсатаççĕ, вагонсем ахаль тăрасси чакрĕ, таварсем тиесси тата пушатасси хăвăртланчĕ. Станци Сергач отделенийĕнчи ăмăртура 3-мĕш уйăх ĕнтĕ иккĕмĕш вырăнта тăрать. Ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене: станци начальникне И. Сидоров юлташа, вессовщик Авдеев, грузчик Боровков, стрелочник Попов тата Осит юлташсене отделени управленийĕ укçан премилерĕ.

Халĕ станци коллективĕ хĕле кĕме хатĕрленет. Станци çывăхĕнчи çулсенчен пĕр пайне юсанă. Стрелочниксен будкисене, стрелка хуçалăхне юсаса тухнă. Çак ĕçе работниксем хăйсем пуçарса, государство укçине расходламасăр тунă. Уйрăмах ку тĕлĕшпе старши стрелочник Михаил Попов, стрелочниксем Г. Самарин тата Осит юлташсем пример кăтартса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен участокĕсене хĕле кĕме хатĕрлесе çитернĕ. Халĕ стрелочниксем кĕреçесем тăваççĕ, шăпăрсем çыхаççĕ.

Старши машинист В. Клешнев юлташ водокачкăна хĕле кĕме лайăх хатĕрлесе çитерчĕ. Двигательсене, çуртсене лайăх пахалăхпа юсарĕ.

Пассажирсене культурăллă йышăнса ăсатас тĕлĕшпе те ĕçсем лайăхланчĕç. Вокзал çурчĕ таса та типтерлĕ. Кунта плакатсем, хаçатсем, справочниксем пур.

И. ВОРОБЬЕВ,
Станцири парторганизацин секретарĕ.

СУД

Светомаскировка правилине пăхăнманшăн

Власть органĕсем асăрхаттарнă пулин те, Шупашкарти фельдшер шкулĕнче вĕренекенсен общежитин коменданчĕ З. И. Перкова общежити çуртĕсене тĕплĕн тĕттĕмлетме тăрăшман, светомаскировка правилисене пăхăнман.

Шупашкар хулин 5-мĕш участокĕнчи халăх сучĕ З. И. Перкова гражданкăна светомаскировка правилисене пăснăшăн хăй ĕçлекен вырăнта пĕр çулталăк хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле, ĕç укçинчен 25 процент тытса юлмалла суд тунă.

Ют çĕршывсенче

У. Черчилль И. В. Сталинпа калаçни çинчен Англире мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Великобританин премьер-министрĕ г. Черчилль СССР Совнаркомĕн Председателĕпе И. В. Сталинпа калаçни çинчен пĕлтерни Англи пичетĕнче тата радиопередачăсенче тĕп вырăн йышăнса тăрать. Калаçусем çинчен панă коммюникене ирхи хаçатсенче чи курăнмалла вырăнта пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çавăн пекех тата Черчилльпе Гарриманăн заявленийĕсене, пленка çине çырса илнĕскерсене, Черчилль И. В. Сталин патне янă телеграммăна пичетлеççĕ. Мускаври калаçусем çинчен хаçатсем анлă умстатьясем параççĕ.

«Таймс» хаçат çапла çырать: «Черчилль Мускава пынине вырăссен правительствипе вырăс халăхĕ захватчиксене хирĕç тăрас ĕçре Англи правительствипе Англи халăхĕ вырăссене хăвăртрах пулăшма хатĕр тăнине кăтартса паракан символ вырăнне хурса хаклĕç.

Сталинпа Черчилль йывăрлăхсем çине тÿррĕн пăхма хăраман çынсем. Вĕсем пĕр-пĕрипе тачă çыхăну пуçласа яни, пĕр-пĕрине ăнлани, пĕр-пĕрин çине шанни çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен çакă вăл союзниксен стратегине йышăннă план тăрăх пĕр-пĕрипе çирĕппĕн килĕштерсе ĕçлеме май парать.

Россия çар хатĕрĕсем тĕлĕшпе те, çавăн пекех тата территорипе экономика тĕлĕшĕнчен те пысăк çухатусем тÿсрĕ. Ăна халĕ питĕ васкавлă пулăшу кирлĕ. Çав пулăшăва ăна унăн юлташĕсем хăйсен влаçĕ май панă таран кирек мĕнле условисенче те пама пултараççĕ, çапла вара Россиăн паттăр çарĕсем çине тăшман хĕснине вăйсăрлатма пулăшаççĕ. Çак обстоятельствăсенче питех те хăвăрттăн тума лекекен ĕçсене нимĕнле иккĕлену те, нимĕнле кăлтăк та чăрмантарма тивĕçлĕ мар. Черчилльпе Сталин тĕлпулни [illegible] личчен вăрçăра пулнă усăмлă мар [illegible] ру-тăрăва сирсе яма тата вăрçăн чи çивĕч уйăхĕсене шанчăклăн пĕрле кĕтсе илме май туса парать».

«Ньюс кроникл» хаçат çапла çырать: «Мĕнле решенисем йышăнни çинчен, паллах, пĕлтермеççĕ пулĕ. Кĕрешÿ пуçлансан, çакă вăл мĕнле решенисем пулнине хăех кăтартса парать. Анчах эпир çакна шанса тăма пултаратпăр: обстоятельствăсем май парсанах Германи çине пĕрлĕхлĕ наступлени пуçласа яма малтанах калаçса татăлнă пек çак конференцире те тивĕçлĕ решенисем йышăннă».

«Дейли экспресс» хаçат çапла çырать: «Пĕрлешнĕ нацисем пĕр-пĕрне вĕçне çитиччен ăнланса илес ĕçре Черчилль Российăна кайса килни питех те пысăк усă пачĕ.

Мĕнле решенисем йышăнни çинчен эпир пĕлместпĕр, анчах та çакă паллă: Англипе Америкăн Российăна тытăнса тăма пур тĕрлĕ пулăшу парса пынипе пĕрлех, пирĕн пĕрле çыхăнса контратака тăвас куна кĕтсе илме хатĕр тăмалла. Çак йывăр самантра Россия хăйĕн союзникĕсен хăвачĕпе ырă шухăшĕ çине шанать. Пирĕн çĕршыв, çĕнтерÿ сехетне çывхартас тесе, мĕн май килнĕ çавсемпе пуринпе те усă курма сăмах пачĕ».

Гитлер Венгрирен „тупă какайĕ“ тăпăлтарать

ЛОНДОН, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Венгрия ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçă фронтне ямалли войскăсен йышне ÿстерсен, Гитлер Венгрие ун çумне Словакие пĕрлештерме сăмах панă.

Гитлер ставкинчен таврăнсан, Венгрин премьер-министрĕ тата ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Каллаи Венгри парламенчĕн ютçĕршыв ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕн хупă ларăвĕнче çапла пĕлтернĕ: Словакия хăй тĕллĕн государство пулса тăрасси пирки Гитлер иккĕленет, тенĕ. Çавна май Гитлер Словакипе Венгри хушшинче «посредник» пулма кăмăл тунă. Вăл Венгрие унăн çумне Словакие пĕрлештерсе парасси пирки илĕртнĕ.

Словакин пуканелле правительствин премьер-министрĕ Тука Гитлерăн çавнашкал «хăтланăвне» ырланă, çав вăхăтра Словаки президенчĕ Тисо çавна хирĕç тухса каланă. Анчах та Гитлер: Тисо хирĕç тăнине «пысăк чăрмав вырăнне шутлама кирлĕ мар», тенĕ. Каллаи комитета çапла пĕлтернĕ: Фронта Венгри войскисен çĕнĕ контингенчĕсене ярасси çинчен ыйтăва халĕ татса паман-ха, анчах та вăл Гитлер Венгри промышленноçне Германи енчен контрольлесе тăмалла тесе ыйтнине тивĕçтерме тата Венгрирен Германие продовольстви парса тăрассине татах та ытларах ÿстерме килĕшнĕ.

ФРАНЦУЗ ХРЕСЧЕНĔСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ТЫРĂ ПАРАСШĂН МАР

ЖЕНЕВА, августăн 16-мĕш. (ТАСС). Француз хресченĕсем хăйсен тырпулне пĕтерсе тăкнине чарас тесе Францин сурçĕр пайĕнче оккупациллĕ влаçсем питĕ хаяр мерăсем йышăнаççĕ. Вырăнти полицирен пур çĕрте те ятарласа хуралсем тăратнă. Вĕсем капансемпе çапнă тырра хунă сарайсем патĕнче кунĕн-çĕрĕн хурал тăраççĕ. Нимĕçсен Трансоциан агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францин оккупацилемен пайĕнче хресченсем, хăйсен тыррисене реквизици отрячĕсенчен пытарса хăварас тесе, тырпула вăрттăн çапаççĕ. Пюи-де-Дом департаментĕнчи хăшпĕр ялсенче хресченсем хăйсен тырпулне çĕрле çапаççĕ те çĕнĕ тырă миххисене çĕр айне чавса пытараççĕ.

Югослави партизанĕсен хăюллă кĕрешĕвĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Югослави партизанĕсем, Хĕвеланăç Боснире тата Герцеговинăра операцисем тăваканскерсем, темиçе кун каярах Югославин Кăнтăр-Хĕвеланăç пайĕнче нимĕçсемпе итальянецсен тата Павеличăн войскисен гарнизонĕсем çине пырса тапăннă. Партизансем тĕнĕл держависен войскисен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ тата çар материалĕсем нумай тытса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах партизансен вăйлă ушкăнĕсем Сараево çине тата Боснири Баня-Лука çине, çавăн пекех тата Герцоговинăри Мостар çине пырса тапăннă. Партизансем тĕнĕл держависен войскисене Лозница районĕнче, Сербин хĕвеланăç пайĕнчи Купань районĕнче атакăланă. Германин бронетанковăй чаçĕсем июлĕн вăтаçĕрĕнче çав вырăнсенчен партизансен тĕп вăйĕсене хĕссе кăларнă пулнă.

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ СЫВЛАШРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет, августăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германи çине вĕçсе пырса тапăннă.

Августăн 17-мĕшĕнче, çурçĕр тĕлнелле, нимĕçсен йышлă мар самолечĕсем кăнтăр Англин çыранĕсем урлă вĕçсе каçнă. Кăнтăр тата Хĕвеланăç Англири темиçе пункт çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнă пирки хăшпĕр сиенсем пулнă, пушарсем тухнă.

ЕГИПЕТ ФРОНТĔНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: августăн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Египет фронтĕнче патрульсем активлăн кĕрешнĕ. Ĕнер çĕр çинчи войскăсем пĕр-пĕрин çине артиллерирен персе тăнă. Авиаци тăшманăн Çурçĕр-Африка çыранĕ патĕнчи карапĕсем çине вĕçсе пыра-пыра тапăннă. Транспорт суднисем çине бомбăсем тĕл лекнине палăртнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарский коммунально-строительный техникум
объявляет, что прием студентов в техникум продлен до 1 сентября 1942 г.
Условия приема см. газету «Чăваш Коммуни» от 16 июня за № 164.
Дирекция.

Чувашской конторе Сельхозснабжения срочно требуются главный бухгалтер и бухгалтер. Квартира предоставляется.
Обращаться: гор. Чебоксары, ул. Калинина, д. 34, тел. 0-94.

Хлопчато-бумажной фабрике срочно требуются: бухгалтера, счетоводы и табельщики.
Обращаться по адресу: Чебоксары, Дом печати, 2 подъезд, 2-й этаж.

Чувашпромстрахкассе требуются на постоянную работу: оргинспектор, знакомый с работой по взаимному страхованию.
С предложением обращаться — город Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, д. № 21 (здание Кожупряжь). Телефон 6-79, два звонка.

НКФ СССР
КАЗАНСКИЙ ФИНАНСОВО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ ИМЕНИ В. В. КУЙБЫШЕВА
объявляет прием студентов на 1942—1943 учебный год.
Институт готовит высококвалифицированных экономистов-финансистов для работы в финансовой системе и спецбанках. Срок обучения 3 года.
Лица, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 годах, принимаются на 1-й курс без испытаний. В институт зачисляются студенты родственных экономических ВУЗ'ов и факультетов. Студенты обеспечиваются жилплощадью. При институте имеется столовая закрытого типа.
Заявления подавать по адресу: г. Казань, улица Бутлерова, д. 4, 3-й этаж, комната 18, Учебная часть.
Финансово-Экономический Институт.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11203 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. [illegible]